# Кĕçĕн класс ачисене творчествăллă çырма вĕрентес ыйту çинчен

**DOI** 10.31483/r-99423
**УДК** 372.881.1

**Артемьева Т.В.**[a], **Печников О.И.**[b]
ЧР ХПВ Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политики министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ,
Шупашкар, Раççей Федерацийĕ.
[a] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9344-9733, e-mail: tamara.art58@mail.ru
[b] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9969-1272, e-mail: pechn.oleg@yandex.ru

***Аннотаци:*** *Статьян тĕллевĕ* – кĕçĕн класс ачисене творчествăллă çырма вĕрентнин пĕлтерĕшне кăтартасси. Кĕçĕн класс ачисене чăваш чĕлхипе творчествăллă çырма вĕрентнин актуаллăхĕ кĕçĕн класс ачисен текст компетенцине аталантарассипе, текст тăвас хăнăху (уйрăмах творчествлллă çыру) çителĕклĕ аталанманнипе çыхăннă.

*Тĕпчев материалĕпе меслечĕ*. Тĕп меслетсем шутне çаксем кĕчĕç: литературăна тĕпчени, учительсем умне тухса тăракан ку е вăл йывăрлăха тата ачасен ĕçĕнче тĕл пулакан йăнăшсене тишкерни.

Ыйтăвăн кĕске историне пăхса тухнă: ют çĕр-шыв тĕпчевçисем нтворчествăллă çыру хăнăхăвне аталантарас пирки каланă тĕрлĕ идея – творчествăллă çырăва аталантарма пуçламалли чи лайăх вăхăт – 4–5 çул тултарнă тапхăр (М. Монтессори); ачасен творчество пултарулăхне ĕненмелле (С. Френе); хамăр çĕр-шыв ученăйĕсен верентĕвĕ, ĕçĕ – çуралнă кашни ача вăл пулас писатель (Л.Н. Толстой), В.А. Сухомлинскипе Ш. Амонашвили ачасене юмахсемпе калавсем хайлама вĕрентнĕ, И.Я. Яковлев Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсене творчестăллă çырма хăнăхтарса опыт пухнă; чăваш лингводидактикĕсен тĕп çирĕплетĕвĕсем: ачасен творчествăллă çырăвне чĕрĕ калаçăва аталантарассипе çыхăнтармалла (М.Я. Сироткин), япаласемпе пулăмсене сăнани çине таянас пулать (Ф.Т. Тимофеев), текст тытăмĕпе содержанине пĕрремĕш класран тытăнсах тишкермелле (В.Е. Ефимов, И.В. Дроздов, Л.П. Сергеев), тăван чĕлхе урокĕсенче  пĕчĕк сочиненисем çыртармалла (Д.С. Филиппова). Творчествăллă çырма пуçламăш шкулта вĕрентнĕ чухне тĕл пулакан йывăрлăхсене кăтартнă. Тăван чĕлхе урокĕсем валли уйăрнă сехет талккăшĕнче творчествăллă çыру сехечĕсем уйăрни усăллă пуласси сĕнӳ шайĕнче ăнлантарнă.

*Тĕпчев результачĕсем*. 2–4 классенче творчествăллă çыру урокĕсен тĕллевпе задачисене, уроксене ирттермелли уйрăмлăхсене çырса кăтартнă: икĕ эрнере пĕр урок пулмалла, ун тĕп тĕллевĕ – ачасенчен нумай енлĕ аталаннă çын тăвасси. Ĕçĕн тĕп çул-йĕрĕ, мелĕ тата форми: текст содержанийĕпе тытăмне, чĕлхе уйрăмлăхĕсене тишкерни, редакцилени .

Юлашкинчен *пĕтĕмлетӳ* тунă: методистсен идейипе кăтартăвне учительсем ырласа йышăнаççĕ, творчествăллă çыру урокĕсем чăваш шкулĕсенче яланхи практикăна кĕнĕ.

***Тĕп сăмахсем:*** тăван чĕлхене вĕрентни, актуаллăх, кĕске истори, чăваш лингводидактики, творчествăллă çырăва вĕрентни, татса паман ыйтупа çыхăннă лару-тăру, творчествăллă çыру урокĕсем, йĕркелӳ уйрăмлăхĕсем, ĕçĕн тĕп çул-йĕрĕ, меслечĕсемпе формисем.

***Цитатăлама:*** Артемьева Т.В. Кĕçĕн класс ачисене творчествăллă çырма вĕрентес ыйту çинчен / Т.В. Артемьева, О.И. Печников // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2021. – Т. 4, №2. – С. 15-20. DOI 10.31483/r-99423.

# К вопросу обучения творческому письму младших школьников

**Артемьева Т.В.**[a], **Печников О.И.**[b]
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики,
Чебоксары, Чувашская Республика.
[a] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9344-9733, e-mail: tamara.art58@mail.ru
[b] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9969-1272, e-mail: pechn.oleg@yandex.ru

***Аннотация:*** *Цель статьи* – определить значимость обучения творческому письму младших школьников. Актуальность проблемы обучения творческому письму на родном чувашском языке обусловлена необходимостью формирования текстовых компетенций у младших школьников, недостаточной сформированностью у них навыков родной письменной речи, особенно творческого письма.

*Материал и методы исследования.* Основными методами исследования послужили изучение литературы, анализ затруднений учителей и ошибок в работах обучающихся. Рассматривается краткая история вопроса: идеи развития навыков творческого письма у зарубежных исследователей: наиболее удачное начало обучения творческому письму – 4–5 лет (М. Монтессори), необходимость веры в творческие возможности ребенка (С. Френе); ведущих отечественных педагогов: каждый ребенок рождается потенциальным писателем (Л.Н. Толстой), опыты В.А. Сухомлинского и Ш. Амонашвили по сочинению сказок и рассказов учениками, И.Я. Яковлева по обучению творческому письму учеников Чувашской Симбирской школы; основные положения чувашских лингводидактов: опора письменного творчества на развитие устной речи (М.Я. Сироткин), на наблюдение за предметами, явлениями (Ф.Т. Тимофеев), необходимость обучения с первого класса анализу структуры, содержания текста (В.Е. Ефимов, И.В. Дроздов, Л.П. Сергеев), необходимость работы над сочинением текстов-миниатюр на уроках родного языка (Д.С. Филиппова). Освещаются основные проблемы в обучении творческому письму в чувашской начальной школе. Выдвигается предположение об эффективности планирования в рамках часов, отведенных на родной язык, уроков творческого письма.

*Результаты исследования.* Описываются цель и задачи, особенности организации уроков творческого письма в 2–4 классах чувашских школ: рекомендуется проводить в две недели один урок, основная цель – формирование всесторонне развитой языковой личности. Основные направления, приемы и формы работы: работа над содержанием, структурой текста; над языковыми средствами, редактирование.

*В заключение сделаны выводы* о том, что идея и положения методистов приняты учителями, а уроки творческого письма введены в практику чувашской начальной школы.



CC BY

***Ключевые слова:*** обучение родному языку, актуальность, краткая история, чувашская лингводидактика, обучение творческому письму, состояние проблемы, уроки творческого письма, особенности организации, основные направления, методы и формы работы.

***Для цитирования:*** Артемьева Т.В. К вопросу обучения творческому письму младших школьников / Т.В. Артемьева, О.И. Печников // Развитие образования. – 2021. – Т. 4, №3. – С. 15-20. DOI 10.31483/r-99423.

# On the Issue of Teaching Creative Writing to the Primary School Students

**Tamara V. Artemyeva[a], Oleg I. Pechnikov.[b]**
BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education" of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.
[a] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9344-9733, e-mail: tamara.art58@mail.ru
[b] ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9969-1272, e-mail: pechn.oleg@yandex.ru

***Abstract:*** *The purpose* of the article is to determine the importance of teaching creative writing to younger schoolchildren. The urgency of the problem of teaching creative writing in the native Chuvash language is due to the need for the formation of text competencies in younger schoolchildren, the lack of formation of their native writing skills, especially creative writing. Material and methods of research.

The main *research methods* were the study of literature, the analysis of teachers 'difficulties and errors in the students' works. A brief history of the issue is considered: the ideas of developing creative writing skills among foreign researchers: the most successful start of learning creative writing is 4-5 years old (M. Montessori), the need to believe in the creative abilities of a child (S. Frenet); leading domestic teachers: every child is born a potential writer (L.N. Tolstoy), the experiments of V.A. Sukhomlinsky and Sh. Amonashvili on composing fairy tales and stories by students, I. Ya. Yakovleva on teaching creative writing to students of the Chuvash Simbirsk school; the main provisions of the Chuvash linguodidacts: the support of written creativity on the development of oral speech (M. Ya. Sirotkin), on the observation of objects, phenomena (F.T. Timofeev), the need to study the structure and content of the text from the first grade (V. E. Efimov, I. V. Drozdov, L.P. Sergeev), the need to work on composing miniature texts in the native language lessons (D. S. Filippova). The main problems in teaching creative writing in the Chuvash primary school are highlighted. The assumption is made about the effectiveness of planning within the hours allocated to the native language, creative writing lessons.

*The results of the study.* The purpose and tasks, features of the organization of creative writing lessons in grades 2-4 of Chuvash schools are described: it is recommended to conduct one lesson every two weeks, the main goal is the formation of a comprehensively developed language personality. The main directions, methods and forms of work: work on the content, structure of the text; on language tools, editing.

*It is concluded that* the idea and provisions of the methods are accepted by teachers, and the lessons of creative writing are introduced into the practice of the Chuvash primary school.

***Keywords:*** native language teaching, relevance, short history, Chuvash linguodidactics, teaching creative writing, state of the problem, lessons of creative writing, organization features, main directions, methods and forms of work.

***For citation:*** Artemyeva T.V., & Pechnikov O.I. (2021). On the Issue of Teaching Creative Writing to the Primary School Students. *Razvitie obrazovaniya = Development of education, 4*(3), 15-20. (In Chuv.) DOI 10.31483/r-99423.

**Умӗн калани**

Чӗлхене вӗренни мӗн тума кирлӗ? Грамматика ӑса хывса пуплев пайӗсен теорийӗпе синтаксис конструкцийӗсен ушкӑнӗсене уйӑрма пӗлме-и? Ҫак ыйтусем кашни шкул ачинех хумхантарма тивӗҫ. Меслетҫӗсем те ҫакӑн пирки сахал мар шухӑшланӑ хыҫҫӑн ҫапларах шухӑш патне ҫитсе тухнӑ. Чӗлхене вӗренни харкам шухӑш-кӑмӑлпа сунӑм-туйӑма палӑртма хӑнӑхма кирлӗ. Урӑхла каласан, хутла вӗреннин никӗсӗнче – логикӑпа грамматика нормисене пӑхӑнса, тӗрӗс те илемлӗ пуплев ӑсласси. Пуплев ӑсласси – творчество ӗҫӗ. Пуплеве хут ҫине ҫырса хуни – ӑславлӑ ҫыру калӑплани.

Пуҫламӑш классенче ӑславлӑ ҫырӑва алла илни питех те пӗлтерешлӗ. Ҫакӑ вӑталӑх тата аслӑрах классенче харкам туйӑмсемпе шухӑш-кӑмӑла хут ҫинче палӑртас вӗренӳ тухӑҫлӑхне тӳрремӗнех витӗм кӳрет.

Кунпа пӗрлех, уйрӑмах юлашки ҫулсенче, пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухакан ачасен ҫыхӑнуллӑ пуплевӗ, вӑл шутра текст калӑплас ӑслай-хӑнӑхӑвӗсем те. ҫителӗклӗ аталанайманни курӑнать. 4-мӗш класран вӗренсе тухакан ачасем паллашнӑ текстӑн тӗп шухӑшне уҫӑмлатса палӑртма, текстра тӑратнӑ информацине хак парса асӑмлама йывӑрланаҫҫӗ. Вӗсемшӗн уйрӑмах харкам текстне калӑпласси кӑткӑс ӗҫ. Тӗрӗслев ӗҫӗсем те ҫакна ҫирӗплетеҫҫӗ.

**Тӗпчев меслечӗсем**

Пуҫламӑш шкул ачисене ӑславлӑ ҫырӑва вӗрентес ӗҫ ӑнӑҫлӑхне ӳстермелли ҫул-йӗре палӑртма ыйту историне, шкулти паянхи кунти лару-тӑрӑва тишкерни пӗлтерӗшлӗ тетпӗр. Кӗҫӗн класс ачисене изложени-сочинени ҫырма вӗрентес ыйтусемпе меслетлӗх уйрӑм ӑслӑх пек ҫуралса ҫирӗпленнӗренпе вырӑс меслетҫисемпе педагогӗсем нумай ӗҫ ҫырса пичетленӗ (Ф.И. Буслаев, И.И. Срезневский, К.Д. Ушинский, Н.Ф. Бунаков, А.Ф. Алферов, В.И. Водовозов, Л.Н. Толстой, В.И. Чернышев, М.А. Рыбникова, К.Б. Бархин, В.А. Добромыслов, Н.С. Рождественский, М.Р. Львов, Т.А. Ладыженская т.ыт.те). Вӗсем ӑславлӑ ҫырӑва вӗрентес ӗҫе системӑллӑ йӗркелеме чӗнсе калаҫҫӗ.

Аслӑ классик-педагогсем те текст тума вӗрентес ӗҫе йӗркелесе-ертсе пырас тӗлӗшпе самай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ (Л.Н. Толстой, М. Монтессори, С. Френе, Д. Родари, В.А. Сухомлинский, Л.В. Занков, Ш. Амонашвили т.ыт.те). Вӗсем пурте ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тесен кашни ачана юратма, ун мехелне шанма кирлине палӑртаҫҫӗ. Л.Н. Толстой шучӗпе: кашни ача «потенциаллӑ ҫыравҫӑ» пулса ҫуралать [9]. С. Френе ҫирӗплетнӗ тӑрӑх: «кашни ачара поэзи ҫӑлкуҫӗ пытарӑннӑ» [12]. Д. Родари ҫапла палӑртать: «ачасене оригиналлӑ текстсем ҫырма вӗрентни – вӗсене чура ан пулччӑр тесе


CC BY

тăрăшни» [5]. Нумай çулхи вĕрентӳ опытне пĕтĕмлетсе М. Монтессори çаплах калать: «çырулла пуплеве вĕрентме пуçламалли чи тухăçлă тапхăр – 4–5 çулхи ача» [4]. В.А. Сухомлинскин «савăнăç шкулĕнче» ачасем пит шеп юмахсем калăпланă [7]. Ш.А. Амонашвили вĕренекенĕсем шкулта хайлама пуçланине килте, харкам тĕллĕн çырса пĕтереççĕ [1].

И.Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ăславлă çырăва вĕрентни те кăсăклă. Л. Н. Толстой Ясная Поляна шкулĕнче Семкăпа тата Федькăпа еплерех ĕçленине тĕпчесе, вăл хăй шкулĕнчи ачасемпе пĕрле калав-юмах хайлассине системăлать. М.Трубина аса илĕвĕсенчен: аслă вĕрентекенĕмĕр кашни шухăша тивĕçлĕ килĕшӳллĕрех çаврăм шырама хистенĕ. Сочинени темисем выранне теми те, тĕп шухăшĕ те уçăмлă ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене суйланă. Пурнăçри чи аса юлнă саманта çырса кăтартни – анлă сарăлнă мел пулнă [2]. Ахальтен мар ку шкулта вĕреннисем чăваш литература классикĕсем пулса тăраççĕ: К. Иванов, Н. Шупуççынни, Тайăр Тимкки, С. Лашман, Ф. Павлов, И. Петрова т.ыт.те.

Яковлев шкулĕн традицийĕсене тăсаканĕсем – паллă чăваш меслетçисемпе чĕлхе тĕпчевçисем: М.Н. Алтынова, Т.М. Матвеев, пĕртăван А.Т. тата И.Т. Трофимовсем, Ф.Т. Тимофеев т.ыт.те.

Ăславлă çырăва вĕрентесси 20 ĕмĕрти чăваш меслетçисене те кăсăклантарнă (А.С. Отачкин, С.С. Ягунов, М.Я. Сироткин, М.Р. Романов, Н.А. Резюков, С.П. Юшков, М.И. Юрьев, Л.П. Сергеев, Р.Н. Петрова, М.К. Волков, В.Е. Ефимов, П.Е. Дмитриев, Д.С. Филиппова, И.В. Дроздов т.ыт.те). М.Я. Сироткин шучĕпе: чи малтан сасăллă пуплев хăнăхăвĕсене аталантармалла. Учитель ыйтавĕсем пулас хайлав планĕ выранĕнче пулмалла [6]. Ф.Т. Тимофеев ăславлă çырăва вĕрентнĕ чухне хайлав содержанине ытларах тимлеме чĕнсе калать. Çут çанталак пулăмĕсене тата таврашри япаласене сăнаса пĕтĕмлетӳсем тăвасси пысăк пĕлтерешлĕ тесе шутлать. Ун шучĕпе: япаласене танлаштарса 2–3 пĕрпеклĕх е уйрăмлăх тупнă хыççăн кашнинчех çыхăнуллă текст ăслама хушмалла [8]. А.Т. Трофимов калуллă план ачасене çывăхрах та шăл çеммирех пулнине палăртать. Вăлах 1-мĕш класранах текст тытăмĕн 3 пайне уйăрма вĕрентме кирлине çирĕплетет. В.Е. Ефимовпа И.В. Дроздов шкул практикине чи малтанах калуллă текстсем ăслассине кĕртме сĕнеççĕ, 2 класăн 3-мĕш чĕрĕкĕнчен пуçласа сăнлав кĕрет, уйлавлă текстсем ăслассi 3-мĕш класран пуçланать [3]. Д.С. Филиппова шучĕпе: текст ăслама вĕрентессине чĕлхе урокĕсенчен кашнинчех йĕркелемелле, пĕчĕкçĕ (миниатюрлă) изложенисемпе сочиненисем валли вăхăт хăвармалла [11]. Р.Н. Петрова «Тăван сăмах» урокĕсенче вĕренекен кашни оригиналлă текст тăрăхах харкам шухăша палăртса 2–3 предложениллĕ пĕчĕкçĕ текст ăслама май пурри çинчен калать. Паянхи меслетçĕсем те ăславлă çырăвăн теорийĕпе практикине ăнăçлă малалла аталантараççĕ. Тухăçлă ĕçлекенсенчен çаксене палăртмалла: Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Федорова, Г.Ф. Брусова.

Традицире ăславлă çырăва вĕрентес ĕçре изложенипе сочинени çирĕпленнĕ. Программăсенче ку ыйтусене «çыхăнуллă пуплеве аталантарасси» сыпăкра çутатаççĕ. Шел пулин те, хăш-пĕр чухне изложенипе сочинени çырни программа ыйтнине тивĕçтерсех пĕтермест. Ачасен ĕçĕсенче пуплев йăнăшĕсем йышлă. Вĕсем синонимсемпе усă курма пĕлмеççĕ, глагол вăхăчĕсемпе выранлă усă курни сахал. Иртнĕ причасти (курмасăр иртнĕ вăхăт) куçа хытă тăрăнать. Чи анлă сарăлнă çитменлĕхсем: паронимсене тивĕççĕр ылмаштарни, диалектизмсемпе, çăмăлттай жаргонсемпе, тĕрлĕ ретри сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсем туни, синтаксис конструкцийĕсем чухăнни, кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем, обращенисемпе пĕр йышши членсем сахалли, юнашар предложенисен çыхăнусăрлăхĕ, инверсисен ăнăçсăрлăхĕ, расна стильсене пăтраштарни, ытлашши сăмахсем кĕртсе лартни т.ыт.те. Хăш-пĕр ĕçре абзац çук, пур пулсан – тĕрĕс мар.

Ачасен ĕçĕсенче учительсем ытларах чухне грамматикăпа орфографи йăнăшĕсене кăна тĕрĕслеççĕ. Содержанипе факт тĕлĕшĕнчен тунă йăнăшсене тӳрлетни çителĕксĕр. Учительсенчен ытларахăшĕ творчество çыру ĕçĕсене малтан хатĕрленмесĕр, системăна пăхăнмасăр ирттереççĕ. Ыйту-хурав мелĕ кашни ача харкамлăхне шута илессине хытă чăрмантарать. Нумай чухне ачасен ĕçĕсенче сăмахĕсем те, сăмахсемпе предложение еплерех йĕркелени те тĕрĕс мар, ĕçсенчи предложенисен шучĕ пĕрешкел. Ку çакăнпа çыхăннă. Изложенисене те, сочиненисене те хатĕрленнĕ чухне ыйту-хурав мелĕпе усă кураççĕ. Ачасен астăвăмĕ ку çулсенче питĕ пиçĕ пулнă пирки вĕсем мĕн илтнине пит аван асра хăвараççĕ. Çавăнпа та вĕсен учитель икĕ хут вуласа панине тата юлташĕсем аса илсе каласа панине (темиçе хут), юлашкинчен тепри пĕтĕмлетмелле каласа панине тимлĕ итлесе текста астуса юлмалли кăна юлать. Пуçламăш классенче çак меслете хăнăхнăскерсем, 5–6 классенче те ачасем изложени текстне хăйне евĕрлĕ шаблонпа стенографи тума ăнтăлаççĕ. Çапла вара изложени çыртарни ăславлăха аталантарасси мар, астăвăма аталантарасси пулса тухать.

**Тĕпчев результачĕсем**

Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Федорова иртнĕ çулсенчи меслетлĕх çитĕнĕвĕсене, шкул ĕçĕнчи йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене туллин шута илсе, паянхи меслетлĕх никĕсĕнчи ăслăхсем çине таянса çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç: ăславлă çырăва вĕрентес ĕç куллен тата тивĕçлĕ йĕркепе пулса пытăр тесен ятарлă ăславлă çыру урокĕсем йĕркелени выранлă, тухăçлă пулмалла. Çапла вара, меслетçĕсен шухăшĕсене тĕпе хурса чăваш шкулĕсенче 2–4 классенче ятарласа ăславлă çыру урокĕсем палăртнă. Вĕсене икĕ эрнере пĕрре ирттермелле. Ĕç йĕркине палăртнă чухне ăславлă çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмаллине шута илмелле.

Ăславлă çыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăçлă ирттерес тесен мĕн чухлĕ изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсене мĕнле пурнăçламаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе çыхăнтармаллине, малтанах планламалла. Изложенипе сочинени ăславлăха аталантармалли ĕçсем пулччăр тесен, вĕсен меслет-


CC BY

лĕхне сисĕнӳллĕ улшăнусем кĕртме тивет. Чи малтан ачасем кашни предложение сăмахăн-сăмахăн асра хăварасран асăрханмалла. Ачасем «асĕнче юлнă пуплев çаврăмĕсемпе» (К. Д. Ушинский) калаçма-çырма ан вĕренччĕр [10].

Ушкăнпа ĕçленĕ чухне ача харкамлăхĕ мăкăлтанасран питĕ хăрамалла. Ăславлăх ăславлăхах пулма тивĕçлĕ. Ăславлăх никĕсĕ вара – пур енлĕн аталаннă харкамлăх. Ăславлă çырăва вĕрентессине философипе текст лингвистики, ача-пăча ӳсĕм психологийĕ, пуплев психологийĕ, пихолингвистика, семиотика, лингводидактика, чĕлхепе шухăшлав çыхăнăвĕн тĕпчевĕсен çитĕнĕвĕсене шута илсе йĕркелеме тивет.

2–3 классенче изложенисемпе сочиненисем ытларах *калуллисем* пулмалла. Кунпа пĕрлех майĕпен ачасем калава сăнлав (çут çанталăка, этемĕн питне-куçне, унăн тумне, ĕçне сăнлани) тата уйлав (мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт. ыйтусене сӳтсе явни) элеменчĕсене кĕртме вĕрентсе пымалла. *Сăнлав* элеменчĕсене хăйсен калавĕсене кĕртчĕр тесен малтан ачасене сăмахлă ӳкерчĕксем тума вĕрентмелле (лайăх пĕлекен япаласене, çут çанталăк пулăмĕсене, этеме сăнлани т.ыт.те). Ĕç хучĕсен ансат тĕсĕсене (заметка çырасси, хăнана чĕнесси) çырма вĕрентессине те аславлă çыру урокĕсенче туса пымалла. 4 класра малалла сăнлав изложенийĕсемпе сочиненийĕсем те çырма вĕрентме пуçламалла. Малтанах сăнлав ансат пулмалла: çут çанталăка, этемĕн питне-куçĕпе кăмăлне, унăн тумне, ĕçне сăнлани. тата *уйлав* (мĕншĕн? мĕн пирки? т.ыт. ыйтусене сӳтсе явни). Майĕпен ачасене ансат уйлав ăслама та вĕрентме пуçламалла.

Изложенисемпе сочиненисем çырма хăнăхтарас тĕллевпе ушкăнпа сӳтсе явмалли-çырмалли ĕçсем ирттерсен аван. Кун пек чухне ачасен ăслав аслайхăнăхăвĕсем калăпланса пырассĕ, каярахпа вара вĕсемпе хăйсем тĕллĕн те ĕçлеме пуçлассĕ.

Çыхăнуллă пуплеве аталантарассин шутне калаври пайсене, уйрăм предложенисене тĕрĕс сыпăнтарма вĕрентесси те кĕрет. Çакна шута илсе ачасене сăмах вĕççĕн каламалли, çырмалли текстăн планне тума, план тăрăх каласа пама, çырма куллен хăнăхтарса пымалла.

Çыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăçлă ирттерес тесен кашни вĕренӳ чĕрĕкĕнче миçе изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсенчен хăшĕсем сăмах вĕççĕн тата çырса пурнăçламаллисем пулмаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе çыхăнмаллине, тăван чĕлхе ытти уроксемпе мĕнле шайлашмаллине малтанах палăртса хумалла.

Çыру пуплевĕн ăслайĕсене аталантарас ĕçре пур класра та калаçу çине таянмалла. Çырмалли хăнăхтарăва ытларах вĕрентӳçĕ ертсе пынипе малтан сăмах вĕççĕн тутармалла. Текста калаттарнă чух вĕрентӳçĕ ачасене пуплевĕн çыхăнулăхне лайăхлатма, тĕрĕс çырма хатĕрленме пулăшать. Текста сăмах вĕççĕн тăвакан ачан пуплевĕнчи çитменлĕхсене асăрхаса вăл вĕсене мĕнле тӳрлетмеллине кăтартать кăна мар, çырма пĕлеймен сăмахсене çырма çăмăлраххисемпе улăштарма вĕрентет.

Вуланине каласа пама, изложени çырма хăнăхни ачасене харпăр шухăшне, сăнланине çыхăнуллăн çырса палăртма хатĕрлет.

Ăслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла.

Изложенипе сочинени калăпăшĕ 4 класра пысăках мар пулин те, кăштах ӳсет. Вĕсене тӳрех тасан çыртармалла, икĕ хут çыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла мар.

Кĕçĕн класс ачисене изложени-сочинени çырма вĕрентес ыйтусемпе меслетлĕх уйрăм ăслăх пек çуралса çирĕпленнĕренпе вырăс меслетçисемпе педагогĕсем питĕ нумай ĕç çырса пичетленĕ. Вĕсем творчествăлла çырăва вĕрентес ĕçе системăллă йĕркелеме чĕнсе калаççĕ.

Ăславлă çыру хăнăхăвĕсем текст ăслай-хăнăхăвĕсем çинче никĕсленсе çирĕпленнине те асра тытмалла. Ача текст тытăмне, шалашĕ мĕнле калăпланнине уçăмлайман, текст ăслама вĕренсе çитеймен пулсан ăславлăх çинчен калаçма пулать-ши.

Кĕçĕн классенче текст ăслама вĕрентмелли ĕçсене 4 ушкăна уйăрса пăхмалла.

1. Текст содержанийĕпе ĕçлесси (содержанипе унăн ячĕ хушшинчи çыхăнăва курма вĕрентетпĕр).
2. Текст тытăмĕпе ĕçлесси (содержанипе унăн форми хушшинчи çыхăнăва курма вĕрентетпĕр).
3. Текстри чĕлхе хатĕрĕсемпе ĕçлесси (палăртнă содержанипе шухăшсене уçма, юнашар предложенисемпе текст пайĕсене çыхăнтарма чĕлхе хатĕрĕсем епле пулăшнине курма вĕрентетепĕр).
4. Текста юсассипе ĕçлесси (содержанипе формăна редакцилес ăслай-хăнăхусене вĕрентетпĕр).

Содержанипе *шухăш тĕлĕшĕнчен ĕçлесе* содержание ăнланса асра хăварас çак хăнăхусене аталантаратпăр: сăнасси тата асра хăварасси; содержание уçса парасси; содержание темăна пăхăнтарасси; тема чиккисене палăртасси; содержанин тĕп шухăшне палартасси.

Ку хăнăхусене ăса хывасси çак хăнăхтарусене пурнăçлани урлă пулса пырать: ирĕклĕ каласа пани; тĕплĕн каласа пани; ирĕклĕ диктант çырни; тĕплĕ е тулли изложени çырни; ыйтусене хуравлани (текст тăрăх, сюжетлă ӳкерчĕксен ярăмĕ тăрăх, тема тăрăх); ушкăнпа юмах хайлани; çут çанталăка сăнани; ӳкерчĕк темине сĕннĕ темăсенчен пĕринпе ят пани; тупмалли юмах тупсăмне тупни; ӳкерчĕке (ӳкерчĕксене) сăмахсемпе ӳкерни; «чи кирлĕ» сăмахсене тупни; «иккĕмĕшле» сăмахсене катертни; текста сĕннĕ темăсенчен пĕринпе ят пани; юмах е калав ятне тĕрев сăмахĕсем пулăшнипе ят пани; текстран тĕрев сăмахĕсене çырса илни; тема тăрăх тĕрев сăмахĕсене тупни; текстра ытлашши предложенисене тупни; предложенисене темиçе тема тăрăх пайлани; текст пуçламăшне е вĕçне ăслани; тема (текст) тăрăх панă ыйтусен хуравĕсене çырса хуни; çут çанталăк пулăмĕсене çырса хуни; тема (текст) тăрăх ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене çырса хуни; текст тăрăх лартакан пĕр ыйту хуравне çырса хуни; текстри предложенисен шутне кĕскетни (текста хĕсни); кĕскен каласа пани е кĕске изложени çырни; суйлавлă каласа пани е суйлав изложени çырни; текста (ӳкерчĕке) ят пани; тĕп шухăша уçса паракан сăмахсене çырса хуни (аялтан йĕр туртса палăртни); тĕп шухăша уçакан ваттисен сăмахне е каларашне тупни тата çырса хуни; ваттисен сăмахĕсем е каларăшсем тăрăх сочинени çырни т.ыт.те.

*Текст тытăмĕпе* ĕçлесе чи малтан план тума вĕрентекен хăнăхтарусене пурнăçлаттаратпăр. Кунта


CC BY

сюжетлӑ ӳкерчӗксен пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк. План тума вӗрентсе, ачасен текст эрешне май пур таран ытларах пӗрес хӑнӑхӑвне аталантаратпӑр. Урӑхла каласан, текст рефератне (аннотацине) ыйтуллӑ, калуллӑ, ят предложенисемпе калӑплама хӑнӑхтаратпӑр. Кунта ҫакнашкал хӑнӑхтарусемпе анлӑ усӑ куратпӑр: арканнӑ плана сюжетлӑ ӳкерчӗксен ярӑмӗ (текст) тӑрӑх майлаштарни; калуллӑ текст тӑрӑх сӑмахлӑ ӳкерчӗк туни; текста сюжетлӑ ӳкерчӗксем (план) пулашнипе пайлани; текст тӑрӑх ыйтусем лартни.

*Текстри чӗлхе хатӗрӗсемпе* ӗҫлесе ҫак задачӑсене пурнӑҫлатпӑр: предложенисене грамматика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркелесси, текста пуҫласа ярасси тата вӗҫлесси, юнашар предложенисене тата текст пайӗсене тивӗҫлӗ чӗлхе хатӗрӗсемпе ҫыхӑнтарасси (ытларах чухне япалана пӗлтерекен хӑй пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсемпе). Кунта ҫакнашкал мелсемпе ханӑхтарусем пурнӑҫлани вырӑнлӑ: пуҫламӑшӗ тата вӗҫӗ тӑрӑх сӑмах вӗҫҫӗн хайлав ӑслани; пуплев калӑпӗсене урӑхлатни; предложенисенчи грамматика никӗсне анлӑлатни; аркатнӑ е юриех пӑснӑ предложенисене юсани (малтанхи вӑхӑтра сӑмахсене тивӗҫлӗ грамматика формисенче паратпӑр, кайран – пуҫламӑш формӑра); икӗ предложенирен пӗрре е пӗр предложенирен иккӗ туни; юнашар предложенисене е текст пайӗсене ҫыхӑнтаракан сӑмахсене тупни; антонимсем (синонимсем) тупни. Хӑнӑхусем кӑштах ҫирӗпленсен калавҫӑ (ӗҫе хутшӑнакансен) сӑпатне, ӗҫ вӑхӑтне улӑштармалли изложенисене кӗртетпӗр.

*Текста юсассипе* ӗҫленӗ чухне ачасем тӑвакан йӑнӑшсене тӳрлетесси ҫине питӗ тимлӗ пӑхма тивет. Ача тимлӗхӗ каланин содержанийӗ ҫинче. Никам та вӑл е ку предложенире вӑл е ку сӑмахпа усӑ курас-ха тесе калаҫмасть. Ача калаҫма пуҫласан ӑна пӳлес мар тесе тӑрӑшмалла, ҫавӑнпа та нумай грамматика йӑнӑшне курмӑш пулма тивет. Шкул парктикинче ҫакнашкал тӳнтерле пулӑма асӑрхама пулать: учитель калаҫакан ачана пӳлсех йӑнӑшне тӳрлетсен, вӑл мӗн каланине те манса каять, малалла сӑмахлаймасть. Ку вӑл тимлӗх содержани ҫинчен форма ҫине куҫса кайнипе ҫыхӑннӑ. «Упреждающий синтез меанизмӗн» (Н. И. Жинкин) ӗҫне чӑрмантарасран асӑрханса, учитель ача тӑвакан грамматика йӑнӑшӗсемпе ӗҫлессине вӑл тунӑ монолог хыҫне хӑварать. Асӑрханӑ йӑнӑшсемпе ӗҫлессине класпа пӗрле йӗркелесен аван. Ан тив: учитель ҫапларах ыйту ларттӑр : «Кам мӗнле йӑнаш асӑрхарӗ? Тӗрӗс мӗнле каламалла?»

Ку вӑл йӑлтах изложенисеме сочиненисен хатӗрлев тапхӑрӗнче тумалли ӗҫсем ҫинчен пулчӗ. Хут ҫине ҫырнине юсамашкан ҫакӑн пек памяткӑсемпе усӑ курма юрать:

*Редакциле*: 1. Хайлав содержанийӗ ячӗпе килӗшсе тӑрать-и? 2. Хайлавунта пӗр сӑмахпах ҫине-ҫинех усӑ курман-и? Усӑ курнӑ пулсан, вырӑнлӑ-и вӗсем? 3. Вырӑнлӑ мар пулсан, урӑххисемпе улӑштар. 4. Абзацсене пайлани вырӑнлӑ-и? 5. Предложенисем ҫыхӑнуллӑ-и?

*Тӗрӗсле:* 1. Сас паллисем ниҫта та сиксе юлман-и? 2. Предложенисем вӗҫне чарӑну паллисене тӗрӗсех лартнӑ-и? 3. Ҫыпӑҫса ларнӑ сӑмахсем ҫук-и? 4. Хутлӑ сӑмахсене тӗрӗсех ҫырнӑ-и?

**Пӗтӗмлетӳ**

Ӑславлӑ ҫыру урокӗсем чӑваш пуҫламӑш шкул системинче ӑнӑҫлӑ ҫирӗпленчӗҫ. Кашни урок текст ӑслай-хӑнӑхӑвӗсене калӑпламалли конкретлӑ тӗллеве пӑхӑнать. Текст ӑслас ҫӗре чӗлхепе пуплев хӑнӑхӑвӗсенчен кашниех хутшӑннине шута илсе, тӗллев тесе уйӑрман ӑслайсемпе хӑнӑхусем вӗренӳ хатӗрӗ вырӑнӗнче пулаҫҫӗ.

***Список литературы:***

1. Амонашвили Ш. Единство цели: пособие для учителя / Ш. Амонашвили. – М.: Просвещение, 1988. – 2008 с.
2. Воспоминания воспитанников Симбирской чувашской учительской школы // И.Я. Яковлев в воспоминаниях современников. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1968, С. 50–121
3. Ефимов В.Е. Сборник текстов для изложений и сочинений: пособие для учителей 1 – 3 классов чувашской школы / В.Е. Ефимов, И.В. Дроздов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1979. – 128 с. (На чуваш. яз.)
4. Монтессори М. Дом ребенка. Метод научной педагогики / М. Монтессори. – М.: АСТ; Астрель, 2005. – 123 с.
5. Родари Дж. Грамматика фантазии. 4-е изд. / Дж. Родари. – М.: Самокат, 2016. – 272 с.
6. Сироткин М.Я. Развитие речи у детей / М.Я. Сироткин // Халӑха вӗрентес ӗҫ. – 1933. – №1 (42). – С. 8–16. (На чуваш. яз.)
7. Сухомлинский В.А. Сердце отдаю детям. Рождение гражданина. Письма к сыну / В. А. Сухомлинский. – 2 -е изд. – Киев: Рад. шк., 1987. – 544 с.
8. Тимухха Х. Политехнизация школы и обучение языку / Х. Тимухха // Халӑха вӗрентес ӗҫ. – 1931. – №5. – С. 4–6.
9. Толстой Л.Н. Педагогические сочинения / Л.Н. Толстой; сост. Н.В. Вейкшан (Кудрявая). – М.: Педагогика, 1989. – 544 с.
10. Ушинский К.Д. Избранные педагогические сочинения: в 2-х т. / К.Д. Ушинский; ред. А. И. Пискунов. – М.: Педагогика, 1974. – 439 с.
11. Филиппова Д.С. За повышение качества преподавания чувашского языка и литературы / Д.С. Филиппова // За повышение качества преподавания чувашского языка и литературы. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1965. – С. 3 – 13. (На чуваш. яз.)
12. Френе С. Избранные педагогические сочинения / С. Френе. – М.: Прогресс, 1990. – 485 с.

***References:***

1. Amonashvili, Sh. (1988). Edinstvo tseli: posobie dlia uchitelia., 2008. M.: Prosveshchenie.
2. (1968). Vospominaniia vospitannikov Simbirskoi chuvashskoi uchitel'skoi shkoly. I.Ia. Iakovlev v vospominaniiakh sovremennikov, 50-121. Cheboksary: Chuvash. kn. izd-vo.


CC BY

3. Efimov, V.E., & Drozdov, I.V. (1979). Sbornik tekstov dlia izlozhenii i sochinenii: posobie dlia uchitelei 1., 128. Cheboksary: Chuvash. kn. izd-vo.
4. Montessori, M. (2005). Dom rebenka. Metod nauchnoi pedagogiki., 123. M.: AST; Astrel'.
5. Rodari, D. (2016). Grammatika fantazii. 4-e izd., 272. M.: Samokat.
6. Sirotkin, M. Ia. (1933). Razvitie rechi u detei. Khalakha verentes ec, 1 (42), 8-16.
7. Sukhomlinskii, V.A. (1987). Serdtse otdaiu detiam. Rozhdenie grazhdanina. Pis'ma k synu., 544. Kiev: Rad. shk.
8. Timukhkha, Kh. (1931). Politekhnizatsiia shkoly i obuchenie iazyku. Khalakha verentes ec, 5, 4-6.
9. Tolstoi, L.N., & Veikshan, N.V. (1989). Pedagogicheskie sochineniia., 544. Tolstoi; M.: Pedagogika.
10. Ushinskii, K.D., & Piskunov, A.I. (1974). Izbrannye pedagogicheskie sochineniia., 439. Ushinskii; M.: Pedagogika.
11. Filippova, D.S. (1965). Za povyshenie kachestva prepodavaniia chuvashskogo iazyka i literatury. Za povyshenie kachestva prepodavaniia chuvashskogo iazyka i literatury, 3-13. Cheboksary: Chuvash. kn. izd-vo.
12. Frene, S. (1990). Izbrannye pedagogicheskie sochineniia., 485. M.: Progress.



***Авторсĕм çинчен пĕлтерни***

**Артемьева Тамара Васильевна** – педагогика ăслăлăхĕн к-чĕ, доцент, ЧР ХПВ Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политики министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, Шупашкар, Раççей Федерацийĕ.

**Печников Олег Иванович** – педагогика ăслăлăхĕн к-чĕ, доцент, ЧР ХПВ Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политики министерствин «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, Шупашкар, Раççей Федерацийĕ.

***Информация об авторах***

**Артемьева Тамара Васильевна –** канд. пед. наук, доцент, БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики; Чебоксары, Российская Федерация.

**Печников Олег Иванович –** кандидат педагогических наук, доцент, БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики; Чебоксары, Российская Федерация.

***Information about the authors***

**Tamara V. Artemyeva – c**andidate of pedagogical sciences, associate professor of BI of FVE “Chuvash Republican Institute of Education” of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.

**Oleg I. Pechnikov – c**andidate of pedagogical sciences, associate professor of BI of FVE “Chuvash Republican Institute of Education” of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.



**Поступила в редакцию / Received / Редакцие çитнĕ** 18.08.2021
**Принята к публикации / Accepted / Пичетлеме йышăннă** 28.09.2021
**Опубликована / Published / Пичетленсе тухнă** 28.09.2021



CC BY